Уйрăм № хакĕ 25 пус. *Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*




Çывăхланччăр йал, хула,—
Тӳрлетер, йусар çула!
Çулĕсем пулччĕр такăр-тӳрĕ,
Лайăх çул культурă кӳрĕ,
Кӳрĕ тем чухлĕ тавар,—
Атăр лайăхрах тăвар!

(Уйăп Мишши).

# № 5

# Капкăн

# Йетĕрне районĕнчи Кăкшăм йалĕнчи хăш-пĕр етем патне йанă çыру

Сирĕн пата пĕр-пĕр йерçнĕ вăхăтра хăнана пырас тенĕччĕ, анчах пушă вăхăт тупайман пирки пыма май килмерĕ. Çавăнпа халĕ çыру урлă сирĕнпе калаçса илме шухăш тытрăм.

Çырун малтанхи йĕркисенче Тилĕ Ваҥкине салам йаратăп. Мĕнле пурăнатăн, халăха мĕнле улталатăн, Тилĕ тусăм? Санăн хут çинче çырмали хушамату мĕнлеччĕ-ха?Манса карăм-çке-ха,—Лиçинцинчĕи-ха? Чăнах та мантăм. Район прокурорĕ те маннă сана. Санăн пек ывăнма пĕлмесĕр вăрласа, колхоза чавса тăршех лартса пурăнакан çынна сутпа следстви органĕсем йенчен манăçа хăварни килĕш ех каймасть. Манакансем çине кӳренетĕн пулсан, пирĕн пата жалăбă çырса йама пултаратăн, вара епĕр „Капкăнăн“ мăн хуранĕнчен йĕплĕ çăмах антарса вĕсене хырăмĕсем тăраниччenех çитерсе йама пултаратпăр. Епĕ илтнĕ тăрăх, Кăкшăм колхозникĕсем иртнĕ кĕркунне Çĕмĕрлене Йетĕрнери спирт савăтĕнчен 20 пичке спирт илсе кайнă та, 2 витре спиртне çул çинче „çухатнă“. Хĕле кĕрсен, спиртпа Шупашкара килсен пĕринче—130 литр, тепринче 114 литр спирт тухман. Ку спирт вăррисен йăви санăн патăнта пулнă, теççĕ.

Кăна илтсен епĕр тĕлĕнсе хытсах кайрăмăр. Мĕнрен вара çав тери тĕлĕнтĕр-ши?—тесе ыйтăн есĕ, калам: епĕр пит хытă тĕлĕнтĕмĕр вăл вăрăсен йăви санăн патăнта пулнинчен мар, çпирчĕ çав терийех нумай çухалнинчен те мар, мĕнле майпа есĕ çавăн пек ĕçсем тунă хыççăн та, халиччenех ирĕкре çӳренинчен, тĕрмене кайса ларманнинчен тĕлĕнтĕмĕр.

Тата ыйтмали пур: Малай йатлă çынпа есĕ ĕлĕкренпех туслă-и, йе Йетĕрнери çу савăтĕнчен Çĕмĕрлене кантăр çувĕпе кайсан, Малай хватере хăйĕн килне кĕрсе вырнă кац кăна тусланса кайнă? Ара вăл кац есĕ çур литăр çпиртпа илĕртсе, Малайа çу пичкине çĕмĕрсе, виçĕ витре çу илсе, виçĕ витре шыв йартарнă. Шывĕ шăнса ларнипе, кайран Çĕмĕрлере Малайа тытаççĕ.

Иксĕр пит туслă пулсан ăна салам кала-ха манран. Ыйтса пĕл-ха унран: намăсĕ унăн та, санăн пекех, çухалнă-ши? Чăнахах çухалнă пулсан, мана пайанах çырса пĕлтерĕр, вара епĕ хаçат урлă шыраса тупса пама пултаратăп.

Санран тата ыйтмали пур: есĕ колхозăнне кăçал 12 пăт пăрçа вăрлăх вăрласа сутнă, 16 пăт лашасен посыпкине вăрланă. Çавна сутса тунă укçапа мĕн илтĕн? Кирлĕ-кирлĕ мар йапаласем илсех пĕтертĕн пулĕ-ха ăна? Кирлĕ-кирлĕ мар йапала иличч н... нумай çуллăх тĕрме илмелеччĕ. Питĕ кирлĕ пулать вăл сана йусанма.

Тата салам йаратăп Йаробейкин-Васлипе А. Авдрейĕва. Епĕ илтнĕ тăрăх, есĕр иксĕр хăвăр колхозăнне пыл вăрланипе тытăннă. Пылĕ тутлă пулчĕ-и? Уншăн сире пуçран çеç ачашларĕç-и? Сахал унпа. Анчах сахалшăн ан куҫҫан, çав ĕçе тунăшăн сире шурă чул çурта илсе кайассине ĕненсех тăратăп.

Тата манран пы ăк салам Малов йултăша. Есĕ колхоз председателĕ пулса ĕçлетĕн ĕнтĕ. Епĕр илтнĕ, есĕ пирĕн пата Шупашкара килсе кайма шухăшлатăн, теççĕ. Килетĕн пулсан, иртнĕ апрел уйăхĕнче 2 ват лашапа 2 пăт пăрçа парса мытарникрен илнĕ пилĕксĕр-урасăр лашана кӳлсе ан кил. Вăл лаша сирĕн, ийуҥ уйăхĕччен ура çинче пĕр сехет те тăман,вĕрен çинчех çакăнса пурăннă.Кала-ха мана: çав лашана илнĕ чухне есĕ мĕнле тĕлĕксем куртăн? Хăвăрăн колхозниксен аслă пуххинче вăл лашашăн сана пит лайăх пĕçертсе йарасса тĕллен мерĕн-и?

Вăрман илсе паратпăр тесе, кĕркунне колхозниксенчен 13-шер тенкĕ укçа пуçтарнăччĕ есĕр. Укçи саланса кайнă, вăрманĕ çучса кайнă, тесе ӳпкелешеççĕ колхозниксем. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и вăл, çавăн çинчен пире ним вăтанмасăр çырса пĕлтер. Унпа пĕрлех сирĕн колхозăн ревизи комисçи талăкра миçешер сехет çывăрать, çавăн çинчен те епĕр пĕлесшĕн.

Сирĕн колхоз, кĕркунне лартса хăварма тесе, нойабĕр уйăхĕнче 19 теçетке улмуççи (теçеткине 17 тенкĕ те 60 пус парса) илнĕччĕ. Улмуççине кĕркунне мар, çуркунне те лартайман. Çырса йарха пирĕн пата: çавна лартмасăр пурăннă вăхăтра санăн пуçунта мĕн пулнă—çуртри уламĕ-и, ыраш уламĕ-и?

Тата чи йулашкинче пĕр-ик сăмах çакăн çинчен пĕлтер: ку çырура кăтартнă йĕркесĕрлĕхсене пĕтерсе хурасшăн кĕрешес вăхăтра есĕ ăсти çăва тĕпĕнче пулнă,—хăвăр йалăн çăви тĕпĕнче-и йе урăх йалăн çăви тĕпĕнче йе Кăкшăм колхоз председателĕ тесе, кăкшăм ăшне кĕрсе лартăн?

Тивĕçлисене ответ тыттарас ĕмĕтпеле ку çыруран сывă йулса ал пусатăп:

Иван Мучи.

## Хут вĕрентсе кăларакан.

Çынпа вăл нумай калаçма йуратман. Тути хĕрри çӳхелсе кайасран хăраса пурăннă. „Ку ликвидатăра ма кĕтĕм-ши?“—тесе шухăшласа çӳренĕ хыççăн вăл:

—Ой, çитет мана, вунсакăр кун вĕрентрĕм, пайан „выпуск“ тăвас!—тенĕ.

Тĕрлĕ çĕртен представительсем пухăнсан, хут сахал пĕлекен арçынсемпе хĕрарăмсем пухса:

— Вот, йултăшсем, вунсакăр кун вĕрентĕмĕр, пайан сире вĕрентсе кăларатпăр,—терĕ Иванов.

— Ой, чипер калаçсах, Иванов, ара епĕр ăçтан вĕренсе тухатпăр, саспаллисене те лайăхăнах палламастпăр вĕт!—тенĕ хыçалтан хĕрарăм сассисем.

— Ну, ничево. Есĕр пĕлменшĕн епĕ айăплă мар,

— Çак кĕнеке йатне вула-ха есĕ, Наçтуç?

— Темле кĕнеке вăл, пĕлместĕп,—тесе пуçне партă çине чикнĕ Наçтуç.

— Е! Вулама пĕлет ку!—терĕ ликвидатăр.

— Пĕлместĕп çав,—тет Наçтуç.

— Хирĕç калаçса тăнă ан пултăр. Пĕлетĕн,—теççĕ сана.

Çавăн пек хут вĕрентсе кăларчĕç Мартынкасси йалĕнче (Трак р.) хут пĕлменнисене. Хут пĕлменнисене вĕрентсе кăларчĕç, Иванов вĕрентекене никам та кăлараканни çук.

Шаç-Ваç

# „Капкӑна“ килнӗ жалӑбӑсем

### Капкӑнҫӑм!

Хушамата улӑштарас тӗлӗшпе ӑҫта каймала? Епӗр Йенших Нӑрвашри колхозницӑсем (Тӑвай районӗ) хамӑрӑн сӗт илекен пунктра прийомщик пулса ӗҫлекен М. Васильйевӑн хушаматне улӑштарас, тетпӗр. „Кушак“ тесе хушамат парас, тетпӗр ӑна. Мӗншӗн тесен вӑл хӑйма тата сӗт вӑрлама йуратать. Литр ҫурӑ сӗт илсе пырсан, 1, 3 литр илнӗ тесе ҫырса хурать. „Кушак“ теме йурамасть пулсан ӑна ӗне пӑрушӗ тесессӗн те йурать.

**Йенших-Нӑрваш колхозницисем.**

### Капкӑн тус!

Мартынкасси йалӗнчи (Трак р-нӗ) „Хӗрлӗ хӗвелтухӑҫ“ колхоз ҫумӗнчи комсомол организаци тӗрлӗрен кампанисем вӑхӑтӗнче кӑмака хыҫне пытанса выртать. Нихӑш кампанипе те йерсе ӗҫлени ҫук. Ҫултaлӑк ытла член укҫи те пӗр пус пухман. Мӗнле майпа тӗксе кӑларма пулӗ-ши ҫав кӑмака хыҫӗнчен комсомол организацине. Турчӑкапа-ши?

**Шаҫ-Ваҫ.**

### Хаклӑ Капкӑн!

Епӗр Улатӑр хулине вӑхӑтлӑха (пӗрер-икшер уйӑха) ӗҫлеме пынӑ чӑвашсем пӗр-пӗр кун „Капкӑн“ тата „Сунтал“ журнала вуламах Шупашкара пырас терӗмӗр-ха (кунти предприйатисем ҫумӗнчи читалнӗсемпе тӗп библиотекӑра вӑл журналсене тупма ҫук). Хакла ӳкет пулӗ те кунтан Шупашкара пыма, анчах кӑштах билет хакне чакарса памӗҫ-ши ҫеҫ тетпӗр. Билет хакне йӳнерех илмеле тӑвассишӗн хлопотать тӑвас ӗҫе „Капкӑн“ редакцийӗ ҫине хуратпӑр.

Хулана вӑхӑтлӑха пынӑ рабочисемпе колхозниксем хушнипе **Ник. Овчиников.**

### Хаклӑ Капкӑн!

Епӗ Тутаркас районӗнчи Йункӑ йалсоветӗнче ҫур кило пӑта илтӗм. Ҫур кило пӑта ҫине 1 тенкӗ те 75 пуслӑх катӑк татӑк ҫӗҫӗсем тыттарчӗҫ. Картасем тытсассӑн пӑти пӗтнӗ хыҫҫӑн каллех ҫур кило илтӗм те каллех мана татӑк ҫӗҫӗ ем ирӗксӗрлесех тыттарса йачӗҫ. Ҫавӑ ирӗксӗрлесе панӑ татӑк ҫӗҫӗсемпе мӗн тумала-ха ман? Тепӗр тавар илме кайсан катӑк пуртӑ, кӗреҫе, тата ытти ҫавӑн пек утилсырйо йапалисем тыттарса йама та пултараҫҫӗ мана. Вӑл утилсырйо йапалисене хума склад кирлӗ пулать.

**Йалпо членӗ.**

### Паха Капкӑн!

Пӗлместӗн-и есӗ ӑҫти йалпора хунар сутаҫҫӗ-ши? Пирӗн Турхан йалповӗнче (Хӗрлӗ Чутай р.) хунар ҫук. Хамӑрӑн Турхан йалповӗн ревизи комиҫҫине шырамала. Лавкасене ревизи туманни ҫултaлӑк иртнӗ. Хунарпа шырасан тупӑнӗ-ши?

Хамӑрӑн ӗҫлемен ревизи комиҫҫине пӗр-пӗр йурӑхсӑр елемента ҫур кило пӑта ҫине нагрузкӑ вырӑнне тыттарса йама пулмӗ-ши?

**Чеблуков.**

### Паха Капкӑн!

Чернилсӑрах чернилпа ҫырмали майсем ҫук-ши? Аптраса ҫитнӗ ӗнтӗ епӗр Шупашкарти Бубновпа Крупскайа йачӗпе тӑракан шкулсенче 1-мӗш группӑра вӗренекен ачасем. Учителсем пире чернил кӗленчисене кашни кунах киле чиксе кайса, ирхине шкула чиксе пыма хушаҫҫӗ. Чернилӗ илсе ҫӳренӗ чухне пирӗн тумтирсем ҫине тӑкӑнать. Аннесем вӑрҫаҫҫӗ кӗпесене вараланӑшӑн. Малала хамӑр шкулти парттӑсене те кашни кунах шкултан хватере, хватертен шкула йӑтса ҫӳремеле пулать пулӗ.

**Вӗренекен Ҫуҫҫӑ И.**

---

## Подпискӑ кампанинче.

Мартынкассинчи (Трак р.) писмоноҫӗц хаҫат-журналсене халӑх хушшинче ытларах сарассишӗн тӑрӑшмасть.

— Сирӗн писмоноҫӗц хаҫат-журналсем сарассишӗн тӑрӑшать-и?

— Питӗ тӑрӑшса сарать, кашни каҫах хаҫат-журналсене хайӗн айне сарса ҫывӑрать.

**Шаҫ-Ваҫ.**

## Выходной кун.

Мартынкассинчи кӗҫӗн вӑтам шкулта хӗлӗпех йӳҫ купӑста йашки ҫитереҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та чылай вӗренекенсем апатсене ҫимесӗрех тула тухса сапаҫҫӗ.

**Вӗренекен:** Ех-ех-хей, хӑҫан пирӗн шкул директӑрӗ ҫак купӑста йашкине выходной кун тӑвӗ-ши?

**Шаҫ-Ваҫ.**

# Йетӗрнене кайас тесен

Халапа тӳрех пуҫлӑпӑр.

Акӑ, калапӑр, есер Йетӗрнене кайма хатӗрленетӗр. Хатерленсе те ҫитнӗ пек туйӑнаṫ сирӗн шутпа. Савна матку-и йе кам та пулсан урӑххи пулаṫ-и, вӑл:

— Тата мӗн илмеле пулӗ ара?—ыйту парӗ сире.

Есӗр те:

— Мӗн тата, ҫитрӗ пулӗ ӗнтӗ,—тейӗр.

Есӗр васкатӑр... Вара ҫав васкавӑ вӑхӑтра ҫакна кӑшт та ан манӑр. Калатпӑр вӗт-ха, хытӑ аса илӗр!

Малтанах кружкӑ лайӑхханах чӗркесе чикӗр. Какай етеме ҫиме йурахлӑраххине илӗр. Ҫитро йе квас малтанах багажпа иарсан авантарах.

Хаҫат, шахмӑт, шашкӑ, домино, радио тата радиопитани непременнӑ илӗр.

Нимрен ытла—лампӑ, краҫҫин хатӗрлӗр тата кроваṫ манса ан хӑварар.

Май пулсан авантарах кино ленти тата механикне те запас илсе тухсан, ытла та аван пулаṫ.

Но вот, ҫак йапаласемпе шанчакланах Йетӗрнене кайма пултаратӑр. Урӑх нимех те кирлӗ мар, ыттисене Йетӗрнерех тупма пулаṫ. Анчах чӑтӑмлах тенӗ йапалана чылайтарах илмеле тивет. Ӑна хайпӗр ҫӗрте те расхутлама пулаṫ. Ширпотреб иапали еппин вӑл Иетернере.

Тӗлӗнмели нимех те ҫук кунта. Ҫак канашсем сире чӑнах та Йетӗрнере усалӑ пулма пултараҫҫӗ.

Акӑ есӗр Йетӗрнене ҫитрер. Ҫул ҫинчен пынӑ ҫынӑн сирӗн каштах ҫийес килет. ГОРПО столовӑйне чупса кӗретӗр.

— Ҫимели мен пур?—ыйтатӑр.

— Нимех те ҫук: постный суп, сӗт тата коклет пур,—тесе ответлеҫҫе сире.

Апатсен хакесемпе палашатӑр.

— Сӗт 3 тенкӗ те 40 пусах тӑратӗ-и вара?—чӑтаймасӑр ыйту паратар.

— Петӗмпе вӑл—сет 40 пус тата кружкӑшӑн залог 3 тенкӗ,—ответлет сире буфетчица. Вара есӗр, залог хума укҫа тупаймасан, паҫӑр илсе тухнӑ кружкӑпа сӗт илетер. Тата шаршла какайран туна коклетне йе калоасси ҫисе хавӑн ашна таварса калариччен, хӑвӑн чӑмаданри какайпа аванах уса курма пулаṫ.

— Ӗҫмели тавраш пури тата сирӗн столовӑйра?

— Нимен те ҫук. Чей ҫук, сахар ҫук, вообше нимӗн те ҫук,—теҫҫе сире.

Ку йапаласене хайпер ҫӗрте те тем чухлех илме пулаṫ. Йетерне столоваие вал йапаласене Сӑрӑ шывӗпе хутшантарса еҫтерме ӳркенет иккен,—шухӑшлатӑр есер.

— Ҫитро пур-и еппин?

— Ой, ан калаҫарах. Ҫитро вӑл пирӗн Йетӗрнере халиччен пулман йапала,—ответ илетӗр, калаҫма вӑтанман буфетчицаран.

Официанкӑсем апаг пырса парасса 30—40 минут сахалтан та кӗгсе ларна чух, паҫӑр манса хӑварман хаҫатсем каллех усса йураҫҫе.

Унта-кунта ҫиткелесен, каҫ та пулма пахаṫ. Колхозник ҫуртне выртма вӗҫтеретӗр. Унта ҫамалланах кӗретер.

— Халах ҫук, пошалӑстӑ, кӗрсе выртӑр, вырӑн ҫитет,—теҫҫе сире.

— Кунта „сопротивлени" ҫук иккен,—шутлатӑр есӗр.

Пропуск пекки илсе вырнаҫатӑр есӗр. Анчах кроваṫ ҫине выртма „ӑрасна сыхлӑх" кирлине конешна, есӗр унти йӑлана хӑнӑхмансkерсем пӗлместӗр. Хӑвӑн килти (хватерти) пекех кроваṫ ҫине кӑштах чӑсӑлса выртатӑр. Вара сирӗ шӑна вӗҫнипех хумханса ларакан кроваṫ пуҫран та, ураран та шӑши таппи пек ҫапса лараṫ. Паллах, вӑл тапӑран пӗччен тухма ҫук.

— Пулӑшӑр!—кӑшкӑратӑр есӗр.

„Хӑвӑрт пулӑшу" паракансем часах чупса пыраҫҫӗ.

— Мӗн ара, варсӑр пултӑр-им?..

— Куратар хусамӑрах!..

— А-а-а! Конешнӑ, конешнӑ! Асӑрхас пулаччӗ. Пирӗн ҫавӑн пек ҫав,— теҫҫе хавӑрт пулӑшакансем.

— Парар урӑх кроваṫ!..

— Пурте ҫав суртах...

— Урайне выртатӑп еппин, билет хакне чакарӑр.

— Хакӗ пӗр хаках: хӑṫ урайӗнче, хӑṫ кроваṫ ҫинче...

Ҫакӑн пек, физкулӡтурӑн норминче те ҫук прийомсем сирен кӑмала каймаҫҫе. Вара есӗр каллех паҫар манса хӑварман кровате кӗртсе вырнаҫтарса ларгатӑр, килти пекех шанчаклӑн саралса выртатӑр.

Пӳлӗмре тӗттӗм.

— Хуҫи, лампа парӑр-ха?—тетӗр.

— Ой, ан шарлах! Мен пурӗ те икӗ лампӑ ҫеҫ пирӗн,—ответлеҫҫӗ сире.

Каллех хӑвӑн запас илнӗ лампӑна ҫутса йаратӑн.

Конешна, есер кулӡтурла ҫын: хаҫат вулас килет сирӗн, радио итлессшӗн есӗр, шашкӑ тата шахматла та выӡама ӳркенместер. Ыйтатар ку иапаласене те.

— Ҫук вӗсем пирӗн, нихӑшӗ те ҫук,—илетӗр хӑвӑртрах ответ колхозник ҫуртенчи служӑшчирен.

Мен тавас тетӗр-ха? Чӑрмав пулсан та, каллех хаварӑн запасла фондран кӑларма килет ку йапаласене те. Конешна йапӑх мар—унта та, кунта та самообслуживани!

Ҫав кварталгах кино-клубӗ. Нимех те тӑмасṫ сире унга ҫитме. Вӑхата кулӡтурлӑрах иртерме хӑнахнӑ халӗ есер.

Клубра „Зарэ" картин пыраṫ, 7 пайлӑ вӑрӑм картин вӑл. Есер виҫе пайне куриччен етемрен тарахлама вӗреннӗ механиксем 10—15 хутчен картина чара-чара ларгса сирӗн чӑтӑмлӑха каларсах илеччӗҫ. Вара есӗр те тагах асап курасран йулашки тавата паине ыран курма хӑварса халӑхпа перлех клубран тухса утатар.

Ҫапла ҫав, пирен канашсемпе аса илтернисем самайах вырӑнла пулнине халӗ есӗр лайӑх анланса илетер енге. Вал терӗс.

Ҫапах та Иетернене 8 сехет иртсен каҫхине ҫитме ытла та йапах.—Пер пачкӑ пирус илме йе пӗр кружкӑ шыв ӗҫме те уҫӑ алак тупаймастӑн.

Тата ҫакна та хытах аса илгересшен епӗр. Иетӗрнене кайнӑ чух паҫӑр усалӑ пулнӑ йапаласене илсе кайнипе перлех, хашпӗр епӗр асӑнна учрежденисемпе организацисем валӡи майлӑрах пуҫлахсем илсе кайсан, авантарах пулмала.

Епӗр ҫаваншӑн сасалатпӑр.

Ник. Пушкин.

# Правлени кахаллӑхӗ

Кивпулӑхри „Хӗрлӗту“ колхоз (Ишлей районӗ) урам хушшине йӑвӑç лартма тесе шалчасем çапса тухнӑ. Анчах, те çӑка, те йӑмра лартас тесех вӑхӑт иртсе кайнӑ.




**Инке:—Мӗн туса ларан кунта? Ку мӗн шалчисем ара?**

**Правлени кахаллӑхӗ: Çав шалчасем тӗлне йӑвӑç лартма шухӑшланӑччӗ. Анчах, те çӑка, те йӑмра лартас, тесе татӑлаймасӑр ик уйӑх аптӑраса пурӑнтӑмӑр. Халӗ лартма вӑхӑт иртнӗ те, çак шӗшкӗ шалчисемех сипсимӗс çулçӑ кӑларасса ӗмӗтленсе ларатӑп.**

---

## Райсойуз пичче йӗм шыратӑ.

Тутаркас районӗнчи Райсойуз пичче текен каччӑ—районри потребсойуз питӗ те ӑс çитерме пӗлекен пулса çитрӗ йулашки вӑхӑтра. Халӗ вӑл раснах пӗр ӗçшӗн питӗ тапаланатӑ—пысӑк ӑмӑртӑва хатӗрленет пулас—тасаран таса тумланса кӗрнеклӗрен кӗрнеклӗ те нӗрлӗ çӳресшӗн. Ун пек кун пек кӑна мар, вӑйлӑ тумланас. Коçтум пултӑр Шупашкартан илни, йе брӳки, йӗм, тата кирек-мӗн плашчсем-мӗнсем, Кӗçнернире çукки...

Çавӑнпа та ӑна хамӑр çиçтемӑ урлӑ илес мар та, хамӑр лавкасенче сутмала тӑвас мар... ыттисем туйанма пултарӗç те, пӗтрӗ вара каччӑ-пиччен пӗр пӗччен йалкӑшса, çуталса çӳресси... Çавӑнпа та Райсойуз пичче, хӑйӗн бухгалтерӗ Баранӑв йулташ аллипе, çыру чарлаттарчӗ Шупашкара. ГОРТ-ӑн Шупашкарти отделенийӗнчи упаковщикне—Трахвин Мӗтрине, Грачов йулташа адрӗсленет çырӑвӗ. Петр Çергейӗвич Баранӑв ӑна, паллах, вырӑсла тата упаковщикӗ хӑй кӑна вуламала çырнӑ. Акӑ çырӑвӗ:

„Дмитрий Трофимович! Я посылаю с Харитоновым деньги 120 рублей. Постарайтесь пожалуйста достать костюм 50 размера. Если костюм не можете достать, то постарайся купить хотьбы брюки 48 размера или плащ. Прошу вас убедительно после праздника приеду сам лично. Тогда поговорю с Вами кое что.

27—V—1—35 г. С почтением П. Баранов.

Мӗн каласшӑн-ши çак Райсойуз пичче хисепçи Баранов йулташ?

Тӑнлӑр, ытти райсойузсем! Вӗренӗр ӑмӑртма Тутаркассенчен. Вӑл Грачова пӑшӑлтатсах хӑлхаран çакна пӗлтересшӗн: „Епӗр суту-илӳ тума пӗлместпӗр, анчах ӗçне майлама пӗлетпӗр“, тесшӗн вӑл. Тӳрех ГОРТ директӑрӗ патне йе базӑ пуçлӑхӗ йачӑпе коçтум ыйтса çыру йарас—намӑс! „Атӑçӑ—атӑ·пушмаксӑр, çӑпатаçӑ—çӑпатасӑр“ тесе калассӑн туйӑнчӗ, йе „тимӗрçӗн пурти катӑк“ тенӗ пек туйӑнчӗ те, тӳрех сан урлӑ ӗçе майлас, терӗмӗр, тесе каласшӑн вӑл.

Мӗн тӑвас тетӗн ӗнтӗ, упаковщик йулташ? Намӑса ан хӑвар çав тутаркас каччине—Райсойуз пиччене! Ӑмӑртса суту-илӳ тӑватӑп, тет вӗт-ха вӑл. Йӗмсӗр, коçтумсӑр аван мар пулӗ, епӗр нӗрлӗн те ӑмӑртулӑн суту-илӳ тӑватпӑр тесе, магазинра тӗрлӗрен шӑкӑртти-макӑртти сутса лармa!

Н. Ваçанкка

# Кахал

Ирхине шăп 9 сехетре План çектăрĕн пĕчĕкеç-çĕ пÿлĕмне ĕçлекенсем пухăнаççĕ. Машинискă çитет. Вăл хăйĕн çыракан машинне хăй ĕçлекен вырăнне лартать те шаккама пуçлать. Пĕрин хыççăн теприсем ĕçлекенсем килеççĕ. Вĕсем хăйсен сĕтелесен йешчекĕсене уçаççĕ те хучĕсене сĕтел çине хураççĕ, хучĕсем çине ÿпĕнеççĕ. План çектăрĕнче кашни кунхи пек ĕç кунĕ пуçланать.

Чи йулашкинчен Дубинин Йаккăв Иванчă çитет. Вăл кĕрет те савăнăçлăн:

— Ырă кун! Сывă-и, Федăр Николайчă! Сывă-и, Лӳдмила Филипăвна! Пурне те пĕрле саламлатăп! — тесе аллине çĕклесе салют парать.

Унтан вăл васкаса хăй сĕтелĕ çине пăхса илет: сĕтелĕ çинче пĕр купа ĕç хучĕсем ĕçлекене кĕтсе выртаççĕ. Çавăн чухлĕ нумай ĕç выртнине курса Йаккăв Иванчă савăнтах шанса кайать.

Пĕр самант вăл хучĕсем çине пăхса ларать, унтан тем пулнă пек хăвăрттăн çĕкленет те „Правдă“ вулама тытăнать.

Вунă минутран:

— Пăх-ха! Мĕн хăтланаççĕ нимĕçсем? Французсен хаçачĕ „Ер Нувел“ пĕлтернĕ тăрăх...—хăйне хăй пуплеме пуçлать вăл.

Ытти ĕçлекенсем нимте чĕнмеççĕ.

Дубинин умĕнче тумали ĕçсем выртаççĕ. Анчах вăл васкамасть-ха: темле çĕнтерме çук вăй ăна хаçатне малала вулама илĕртет.

Куç харшисене çÿле çĕклесе вăл сасартăк:

— Йулташсем, итлĕр-ха, мĕн çыраççĕ кунта! Пайанхи „Правдăна“ вуланă-и есĕр?—тесе кăшкăрса йарать.

Ĕçлесе ларакансем ĕçленипе тĕтреленсе кайнă куçĕсене Дубинин çине çĕклеççĕ. Лӳдмилă Филипăвнă пĕр самантлăха пичетлеме те чарăнать.

— Халĕ ĕнтĕ хĕрарăмсем ыратусăр ача çуратма пултараççĕ! Илтрĕр-и? Мĕнле лайăх пулать, е?

Çакна каланă чухне Дубинин хăй темиçе ăстрăм çуратнă, çуратнă чухне калама çук пысăк ыратусем тÿснĕ çын пек çĕкленсе калать.

Çыракан машинĕ çĕнĕрен шаккама тытăнать, Йаккăв Иванчă малала вулать. Хаçатра çырнисене вăл пĕтĕмпе, йĕркипе, пĕр сиктермесĕр вулать.

Вуланă хушăра:

— Çураки ĕçĕ лайăх пырать-ха. Пур çĕрте те акаççĕ. Анчах кăçалхи çул мĕншĕн-ха пылчăк çине акни çук? Тен акаççĕ те пуль? Тен хаçат çине кăна çырмаççĕ пуль? Ну, халь малала кайăпăр. Аха! Каллех хулигансем! Тупататуршăн, епĕ вĕсене пĕрте хĕрхенес çук... Пиккар профессăр Варшавăна килнĕ. Хам пулсан, епĕ нихăçан та стратосферăна вĕçес çук: хăть мана ылтăнлăр есĕр... Ну-с, Аслă театрта пайан „Садко“ оппĕрă пырать мĕн. „Град Китеж“ тесе паллă тунă билетсене çирĕм саккăрмăш числана хăварнă. Малала мĕн? Беатă Малкин концерчĕ пулмала. Сатирăпа кулăш касĕ пулать... 598-мĕш пÿлĕме партколлеги Никитин йулташа кĕрсе тухма чĕнет... Çапла... Çапла... Редакци телефонĕсем... Главлит упполномочăннăйĕ 22624-мĕш номĕр...—тесе хăйне хăй калаçса пырать.

Дубинин сехет çине пăхса илет: 11 сехет çеç çитнĕ-ха.

— „Извеçти“ хаçат тата ăçта? „Извеçти“ парăр мана, Федăр Николайчă, ăçта „Извеçти“? Ĕмĕрех ĕнтĕ çав ылханлă курйерпа хаçатсене таçта чиксе хурать!

— Пайан „Извеçти“ çук,—тесе типпĕн ответлет Дубинина Федăр Николайчă.

— Мĕнле апла çук?

— Канмали кун хыççăн „Извеçти“ нихăçан та пулмасть.

Урăх нимте вулама çуккине курса Йаккăв Иванчă шурса-кăвакарса кайать. Ăшĕ вĕçнипе вăл пÿрнисене шатăртаттарса илет, чĕрĕк сехет хушши те пулĕ пĕр хускалмасăр чÿрече йенне пăхса темскер шухăшласа ларать. Унтан вăл хăйне хăй алла илет те васкамасăр кăва хăй паспăрчĕ вальли картонран хытă хупă хатĕрлеме пуçлать. Вăл ку ĕçе пит те тăрăшса тăвать, çĕçĕпе те касать, çилĕмпе те çыпăçтарать, унтан чĕлхи вĕçне çыртсах тунă хупă çине „Я. И. Дубинин“, тесе хăй йатне çырса хурать.

Кăнтăрла иртсен пĕр сехет тĕлне çак пысăк ĕçе вăл пĕтерет. Халĕ ĕнтĕ унăн план ĕçĕсене тытăнмала. Анчах Йаккăв Иванчă тытăнасшăн мар, хăй сĕтелĕ çинчен хутсем çине вăл ÿсĕр çын тĕтĕмпе чыхăнтарнă кушак йевĕрлĕ пăхать—тĕтĕмрен пăраннă пек пăрăнать. Хутсем ăна йалăхтарнă, вăл вĕсем çине пăхса чыхăнсах кайать.

Тулта çуркунне шавĕ илтĕнет. Йаккăв Иванчă кун çинчен пÿлĕмре пĕрле ĕçлекенсене каласа парасшăн.

— Тулта пайан тÿлек, хĕвеллĕ... Ех, утса çÿреме лайăхçке...

— Ĕçлеме ан кансĕрле,—ответлесе хучĕ Лӳдмилă Филипăвнă.

— Епĕ кунта пурне те кансĕрлеп пулас... Кайма та пултаратăп,—айăпсăр айăпа хăварнă çын пек хуйхăрса калать вăл.

Унтан вăл тула тухмали çĕре тухса кайать. Кун та вăл хĕрĕх минут таран йулташĕсем ăна курайманни çинчен, Пиккар профессăр çинчен, тата „Град Китеж“ тесе паллă тунă билетсене çирĕм саккăрмĕш числана хăварни çинчен шухăшласа пăшăрханса ларать.

„Вăт, шуйтансем, театрсем тăрăх çÿреме те вăхăт тупаççĕ. Вăхăчĕ нумай, çавăнпа çÿреççĕ те“,— тесе шутлать вăл.

Дубинин хăйсен пÿлĕмне хайар кăмăлпа таврăнать.

— Сирĕн пата ĕçпе килнĕ çын пур,—тет ăна Лӳдмилă Филипăвнă.—Кĕленче планĕ пирки. Вăл халĕ те коридорта кĕтет пулмала.

— Сирĕнсĕр те пĕлетĕп. Епĕ унта пĕр самантрах ĕçе татма пултаратăп... Тула тухма кăна кайнăччĕ.

Çак самантра ăна пуçлăх патне чĕнеççĕ. Çиленсе:

— Итлĕр-ха, Дубинин йулташ, есĕр пайан та вунă минут кайа йулса килнĕ. Службăна ăна вăхăтра çÿреççĕ. Капла мĕн пулать-ха вăл? Патшалăхран вунă минут пытарса йулни мĕне пĕлтернине пĕлетĕр-и есĕр? Епĕ сирĕн çинчен приказра сире йатлани çинчен пĕлтермеле тăватăп. Халĕ кайма пултаратăр, текех епĕ сире тытса чармастăп, тесе йатлать ăна пуçлăхĕ.

Коридор тăрăх кайала таврăннă чухне Йаккăв Иванчă пуçĕнче хуйхăллă шухăшсем варкаççĕ.

„Пăх-ха, мĕн калаçат. Тупнă калаçма. Çын кунта вăйве хĕрхенмесĕр тискер-кайăк пек ĕçлет, вăл ăна пĕлесшĕн мар, кĕçеленсе кайнă бюрократ! Пиншак тăхăнса йанă городовой!"—тесе вăрçат вăл хăй ăшĕнче пуçлăхне.

— Çук, ку ĕçе епĕ ахаљ хăварас çук! Чăнахах, вунă минута епĕ кайа йулнă ĕнтĕ. Анчах, мĕнле пулнă-ха вăл? Çакăн çинчен ун манпа выљăхпа калаçнă пек калаçмала и-ха? „Епĕ сире тытса чармастăп", тет. Путсĕр, мана тытса чарасшăн! „Кайма пултаратăр!", тет. Мĕнле апла калаçат-ха вăл? Тепре каласан, епĕ кайма та пултаратăп. Епĕ ун çине шалăпă паратăп!

Пÿлĕмри ĕçлекенсене вăл аллисенчен тытат, вĕсен сĕтелĕсем çине пырса ларат, пĕр вĕçĕмсĕр табак туртат. Унган вăл хăй сĕтелĕ хушшине кĕрсе ларат те çырма тытăнат.

„Тăнлантарулă çыру",—тесе листа варрине çырса хурат вăл.

Кÿршĕ пÿлĕмрен хĕрлĕ чернил илсе килсе кăвак чернилпа çырни айне илемлĕн кăна хĕрлĕпе йĕр туртат.

— Дубинин йулташ, мĕнле, кăнтăрти савăт тăрăх есĕр плансем хатĕрлесе çитертĕр-и?—Дубинин патне лăпкăн кăна пырса хуллен ыйтрĕ Федăр Николайчă.

— Ĕçлеме канçĕрлетĕр! Кунта çынна айăп тăваççĕ, вараласçĕ! Ĕнтĕ ман халĕ тÿрре тухмашкăн тăнлантарса çырма та йурамаст еппин? Етемрен унăн йулашки гивлетне—шалăпă парассине те туртса илесшĕн!—хайаррăн кăшкăрат Йаккăв Иванчă.

Федăр Николайчă часах калаçма чарăнса хăй сĕтелĕ йенеле шăват.

— Епĕ вĕсене кăтартăп-ха!

Пуçланă хутне Дубинин малала çырма тытăнат.

„Çак уйăхăн 25-мĕшĕнче мана Пытљаççински йулташ кабинетне чĕнтерчĕç. Кунта мана етем тÿсмеле мар йатларĕç.."

Йаккăв Иванчă калама çук пысăк хĕрÿлĕхпе çырат, чернилĕсем унăн сĕтел тăрăх сирпĕнеççĕ. Çырăв нче вăл хăйĕн патшалăх умĕнче тунă пысăк ĕçĕсене кăтартасшăн тăрăшат:

„Чăнахах, етем калаçма пултарат ĕнтĕ вăл. Анчах ĕçсене тĕплĕн пăхма кирлĕ-çке. Мĕн пирки епĕ вунă минут кайа йулса килнĕ-ха? Мĕншĕн тесен, трамвай чарăннипе епĕ вăхăтра çитеймен".

— Дубинин йулташ килнĕ-и? Ĕнтĕ ăна епĕ кунта икĕ сехет кĕтсе тăратăп. Мĕнле-ши?

— Мĕн калас тетĕр?

— Епĕ, йулташ, кĕленче пирки.

— Суккăр-им вара? Куратăр пуљ-çке, çын ĕçленине? Епĕ кунта калама çук кирлĕ доклад çыратăп, есĕр кĕленчепе... Пулаççĕ те чунсăр етемсем!

Йаккăв Иванчă ĕçпе килнĕ çынна кăларса йарат те каллех çырма пуçлат.

„Трамвай çÿреме чарăннипе вăхăтра çитеймен пулсан, Пытљаççински йулташ мана çавăн пек хулиганла йатлама пултарнă-и-ха?.."

Пилĕк сехет çине çирĕм минут кайсан, Дубинин сĕтел хушшинчен тăрат. Сехет çине пăхат те:

— Каллех çак йуна сăрхăнтаракан ылханлă учреждение çирĕм минут ытлашши иртертĕм. Тискер кайăк пек кунта хăна хĕрхенмесĕр ĕçлетĕн, никам та сана тав тăваканни çук!—тесе мăкăртатса илет.

Йакăв Иванчă тăнлантарулă çырăвне тепĕр кунне çырса пĕтерме пулса, васкаса тухса кайат килнеле.

Ĕç кунĕ пĕтет.

**Иљйа Иљфпа Йĕвгений Петров.**<br>**Куçарни Лашманăн.**

# Хурах, çаратаççĕ!

Йалсоветне кĕнĕ писмоносĕц пĕр çамрăк сарă кăтра çÿçлĕ учителе хаçатсемпе пĕрле „Капкăн" журнала тыттарса хăварчĕ те каллех тухса çухалчĕ.

— Давай „Капкăн" вулас,—терĕ йалсовет председателĕ учител аллинчи „Капкăна" курсан.

— Памастăп,—тавăрчĕ учител.

— Ай-уй вулаттармастăнта-и?—ыйтрĕ çекретар.—

— Вулаттармастăп! Иртнĕ номĕре те есирех çĕтсе пĕтертĕр.

— Мана анчах пар!—кăшкăрчĕ счетовод.

— Никама та памастăп.

— Мĕн пăхса тăратăр! Атăр тытса туртса илетпĕр!—хыттăн кăшкăрчĕ председател сĕтел çине улăхса.

— Атăр!—терĕ те халиччен чĕнмесĕр ларнă колхоз бригадирĕ тÿрех учител мăйĕ çине сиксе ларчĕ.

— Тытăр! Туртса илĕр!—терĕç сасăсем. Унччен те пулмарĕ учител „Капкăн"-не портфĕлне чиксе хучĕ. Çак хушăрах ăна виç-тăвата çын пырса тытрĕç.

—Ай-уй çавна та илеймест пĕр-и!—терĕ председател сĕтел çинчен сиксе анса.

Председател хыççăн счетовод та учителе йарса тытрĕ. Ăна çĕре пусса антарчĕç.

— Хурах, „Капкăн" çаратаççĕ!!

— Ма кăçкăратăн!

— Крау-у-л! Хурах! Капкăн..

— „Капкăн"-на пар, вара йаратпăр!

— Ай-ай! Портфĕл çĕтеççĕ! Хурах!

— Хыт ан кăçкăр!—терĕ председател учител тутине аллипе хупласа. Çак вăхăтрах канцељари коридорĕнче ура сасси илтĕнчĕ. Куна илтсен шалтисем учителе турткалашма пăрахрĕç.

Вара учител пулĕ пек тухса сирпĕнчĕ йалсоветĕнчен.

— Мĕн пулнă сире?—ыйтрĕ йалсоветне кĕнĕ шур сухаллă старик хашкаса.

— Нимĕн те пулман,—тавăрчĕ председател.

— Ара „хурах" кăшкăратăр та. Çынсем пурте кунтала чупаççĕ.

— Татах килеççĕ,—илтĕнчĕ сасă.

— Айда ес тух та: нимĕн те çук те,—терĕ те председател старике вăйпах кăларса йачĕ. Кун хыççăн йалсоветне кĕрекенсем пулмарĕç. Йалсоветри актив „Капкăн" вуламаншăн чылайччен хурланса ларчĕ. Малала кун пекки ан пултăр. Çавăнпа пурне те „Капкăн" çырăнса илме хушатăп.

„Капкăн" тусĕ—**Вл. Дубровский.**

# Кам ĕçлемест--вăл илмест

Митрофан—пултаран:
Çут тĕнчене култаран:
Сивĕ-сивĕ хĕл çитсен,
Хырăмна мĕн тултаран?

* * *

„Митрофан... Митрофан...
Митрофанăн пĕр автан.
Вăл та пулин уксахлать...
Темĕн пулнă хăйамат.
Урăх унăн выљăх çук,
Выљăх хупма карти çук;
Хăйне валљи пĕр ӳпле
Тукаларĕ тем тепле.
Ашшĕ тунă кил-çуртне
Сута-сута пĕтерчĕ;
Кахал пирки хăйĕнне
Ыра йатне çĕтерчĕ".—
Тесе кулаç ачасем
Митрофанран пайан кун.
Сакна илтсен пичĕсем
Хĕрелеç-ши—çук-ши ун?

* * *

—Митрофан! Митрофан!..
Кăнтăр çитет, час вăран!..
Хăвăнах вĕт туймала:
Ака тума каймала.
Сынсем темчул ĕçленĕ—
Заданисем вĕçленĕ.
Уйра вĕрет хĕрӳ ĕç
Чаранмасăр вĕçрен-вĕç.
—Пĕлеп, пĕлеп... Пĕлмесĕр:
Вĕсем чĕлĕм чĕртмесĕр
Халĕ уйра ĕçлеççĕ;
Пĕр пĕринчен иртеççĕ...
Анчах мĕнех тăван-ха
Ман пек сывмар пулсассăн?..
Уйа мĕнле утан-ха
Ура тавраш сурсассăн?..
Кача пӳрни виçĕ кун
Сĕрсе йухма хăтланать,
Вĕче тăрăх вĕри йун
Аран-аран чупкалать...
Утса парам акă пăх;
Хăлттин-хăлттин пустарать
Те тухатмăш, темле йăх
Чуна нуша чăттарать!—

* * *

Хĕвел кашни кулленех
Çӳлерен çӳле хăпарчĕ.
Уйхир, вăрман, мăн улăх
Симĕс сăнпа хупланчĕ
Пирĕн найан Митрофан
Ĕçлемешкĕн тухмарĕ.
Ака тăвас шутпалан
Уйа ура пусмарĕ.

* * *

—Митрофан, а—Митрофан!..
Кăмака çинчен хăçан анан?..
Хăвăнах вĕт туймала:
Утă тума каймала.
Çынсем хĕрсе ĕçлеççĕ.
Есе хăвăрт вĕçлеççĕ.
Пĕр-пĕринпе ăмăртса
Утă çулаç васкаса.
—Пĕлеп, пĕлеп... Пĕлмесĕр:
Дажĕ сăмах чĕнмесĕр,
Черечĕпе харăс тăрса,
Пĕвĕсене выљатса
Ĕçсыннийĕ ут çулать.
Ик кун нимĕн çимерĕм
Пĕтĕм ăш-чик каснăран.
Аран-аран çӳрерĕм
Çамка хысĕ хытнăран.
—Тухтăр патне кайасчĕ,
Вăл хушнине тăвасчĕ.
Унтан чир-чĕр пĕтĕ сан;
Атту хăççан йусанан?
—Вăл пуљ... Анчах Силемпи:
„Кăмака çинчен ан ан" тет,
„Пӳртрен тула ан тух" тет,
„Çынпа сăмах ан хуш" тет.—
Сапла сăмах çантарчĕ—
Бригадира шантарчĕ.
Митрофан—„пултаран"
Хăççан намăс пулĕ сан.
Суйа сăмах йухтаран—
Хăвна хăвах улталан.

* * *

Кун иртет те каç пулать,
Вăхăт шăвать малала.
Çулла темле ĕç пулать:
Пур ĕçне те тумала.
Çынсем хĕрсе выраççĕ--
Тырă пулă пухаççĕ.
Анчах „пирĕн" Митрофан
Ку ĕçе те хутшăнман.
Бригадире каланă:
„Вăйхал йăлтах çухалнă...
Аран-аран çӳретĕп.
Тĕрлĕ чир-чĕр тӳсетĕп.
Тухтăр патне çитрĕм те
Силемпилех каларĕ:
Йĕпе-сапа ăшă кун
Тула тухма хушмарĕ.
Найанланса пурăнсан
Тамашасăр иртеймĕн.
Суйа туни курăнсан
Ыр пуласса кĕтеймĕн...
Ертел пуçлăх хаљ ăна
Справкă илме чуптарнă.
Çавăнпа вăл хулана
Хашка хашка васканă.
„...Колхозник Митрофан
Çанçурăмĕ пит аван...
Чир чĕр тавраш çукă ун,
Клетке тулли вĕрри йун...
Пур ĕçре те чăтмала—
Вăйлă ĕçсем памала..."—
Çапла унăн сывлăхне
Тухтăр çырнă хут çине.

* * *

Хăть мĕнле ĕç колхозра
Ударлăхпа ĕçленет.
Ударлăхпа ĕçленет те
Хăвăрт, пахан вĕçленет.
Унта пĕр-пĕр найаншăн
Ĕç чарăнса тăрас çук.
Пĕрлешӳлĕ вăйхалшăн
Митрофана шеллес çук.

* * *

Ситрĕ хайхи кĕркунне.
Еçсем нĕте пуçларĕç.
Колхозниксем ĕçкунне
Миçе тунă—шутларĕç.
Чакак, Мĕтри, Ухливан
Икçĕршер кун ĕçленĕ,
Пăраскипе Сар Иван
Икçĕртен те иртернĕ.
Комсомолĕс Йевдокким
Икçĕр алă асăпать.
Леш-кассинчи мăн Йекким
Виççĕрпеле савăнать.
Митрофан та тытăнчĕ
Ĕсĕсене шутлама
Шĕвĕр сăмса усăнчĕ—
Хисеп çуктăр савăнма.

* * *

Аслă ампар умĕнче
Колхозниксем куратăн.
Тата вĕсен питĕнче
Савăк кăмăл туйатăн.
Унтах лавсем тăраççĕ.
Хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет.
Пайан уйав тăваççĕ—
Ертел тупăш валеçет
Йашă-кĕрĕм хаваслă.



Хумка йурă кĕвĕлет.
Ватăраххи талпаслăн
Шĕкер сăмах шĕкĕлчет.
Акă çитрĕ кладовщик
Уçрĕ ампар алăкне.
Унпа пĕрле весовщик
Тăчĕ хăйĕн вырăнне.
Уçрĕç аслă журнала:
Унтан пăхса пĕлмеле:
Кама мĕншĕн памала,
Миçе путав виçмеле.
Хайхи „пирĕн" Митрафан
Çитсе тăнă чи малтан.
Хул хушшине мăйахне
Йатнă тата тваттă тан.
—Мана виççе парăр-ха...
Çакна илсен хаљ çитет,—
Çапла çапрĕ сăмаха,

Хăй мăйăхсем хатĕрлет.
Унăн йатне тупрĕçĕ,
Ĕçкунсене кăтартрĕç:
—Пит те сахал тиветçке:
Тăвата мăйăх хатĕрлен.
Пĕри пулсан çитĕçке—
Вăл та пулин тулмĕ тен.
—Мĕнле?! Мĕнле?!.. Аплала!..
Пуç çаврăнать каплала.
Тĕлĕнтертĕр савçимах...
Тĕлĕки ку?.. Йе чăнах?!—
—Тĕлĕк мар ку: чăн-сăмах—

Виçĕ путав ытларах...
Кўр мăйăхна—акă ил:
Урăх тивмест...
Кам ĕçлемест—вăл илмест,—
Сакна маннă имĕш ес.
Йалан „сывмар“ çўренчĕ—
Тĕрлĕ „чир-чĕр“ тўсенчĕ.
Ухливансем, Ивансем
Улт-çичшер лав тултарчĕç.
Митрофанăн куçĕсем
Çакна курсан шывланчĕç.
Çынсем çине пăхсассăн

Куçĕ-пуçĕ çаврăнать,
Тулли лавсем курсассăн
Хаљ тин пайан хуйхăрать.
Ей, Митрофан... Митрофан...
Мĕн ĕçленĕ—йăлтах сан.
Ĕçлеместĕн—илместĕн,
Илместĕн тĕк çиместĕн.
Митрофан—„пултаран“ –
Çут тĕнчене култаран.
Анчах сивĕ хĕл çитсен
Хырăмна мĕн тултаран?

*Георгий Волжский.*

---

# Йĕплĕ сăмах

## Йуратнă ĕçĕ.

Тăманлă Выçли йалĕнчи (Йĕпрес р.) письмоносĕц Давыдăвăн ĕнси çине виçĕ пуçлă кахал хăпарса ларнă. Тен ăна ĕнсе çинчен антарсан, хĕрў ĕç вăхăтĕнче сĕтел хушшинче çывăрса ларма пăрахĕ. Ĕçрен упаран хăранă пек хăрать. Ытлашши ĕçкунĕ пуласран хăрать. Унăн йуратнă ĕçĕ ерех ĕçесси кăна.

Маркăсем пайан алăра çук, кўр çырупа укçуна, почтăра хам çыпăçтарса йарам, тесе илнĕ укçасене шалавар кĕсйине ерех илмешкĕн чикет. Канвертсем çине „доплатной“ тесе çырса хурать (ку ĕçе вăл вара пит йуратать).

Хаçатсене çухатать. Пуçне те çухатмала та, анчах çухатсан çĕлĕк тăхăнса çўремели пулмасран хăраса, сыхланарах çўрет.

— Давыдăв, санран хăçан нĕрлĕ çын пулĕ?

Ун йышши ыйту çине ответ пама пĕлмест пирĕн „Капкăнра“ нумай асăнма тивĕçлĕ Давыдăв йулташ.

Пайман И.

## Çапла ĕççем.

Ĕçлемест. Кашни кун ўсĕр. 200 тенкĕ йахăн растратă. Кам çинчен пулĕ ку?

Сан çинчен те, унăн çинчен те, лешĕн çинчен те, кун çинчен те ун пек сăмахсем калама пултараймастпăр. Аслă Чак (Вăрмар р.) йалпо председателĕ Степанăв Петр çинчен кăна çав сăмахсене калама пулать. Вăл сăмахсене каланă хыççăн: „намăсĕ ăçта-ши унăн“ тенĕ виç сăмаха хушса каламала. Вара пирĕн ĕçĕ те пĕтрĕ, малала ревизи комиççин ĕçлемеле.

## „Ваназар çурутравĕ“.

Кулавари (Трак р.) „Ваназар“ колхозĕн сысна ферми пит илемлĕ вырăнта ларать: унăн веç тавралах шыв йухса выртать. Еверке йенчен анчах çĕрпе чикĕленсе тăрать, çавăнпа ăна „полуострăв (çурутрав) Ваназар“ теме пулать.

Сысна витин килкарти алăкне уçсан унган витине кайас пулсан, çăпата сырнă çын ан пырса кĕр: чĕркуç таранах лапра çине кĕрсе ларăн. Сыснасен пўлĕмĕн навуслă урайĕсем кам та пулин тасатса парасса кĕтсе тĕксĕмĕн выртаççĕ.

Каçхине выртмали пўлĕмре сыснасем ваљљи лапраран тунă „тўшек-çытар“ урай тăршшĕпех сарăлса выртать, пылчăклă сыснасене хăй çине выртма чĕнет.

Сысна ферми пуçлăхĕсем ăçта выртса кунĕн-çĕрĕн çывăрнине пĕлместпĕр. Тен çук та пулĕ вĕсем,—пурри палармасть.

А. Киççерин.

## Ывăлĕнчен пытармасть.




**Ачи**:—Ма есĕ хура хăма çине тилмĕрсе пăхатăн?

**Клас тăшманĕ**: — Хама усă кўрекенсем кам кам пуррине пăхатăп. Кунта вĕт мĕн пур ўсĕрсене, прогулщиксене, кахалсене ўкерсе хунă.

# Процентлă телей

Сивĕ каç. Çĕнйал Шетмĕн аслă урамĕпе епĕ Салат Çтапанĕпе пухуран килеле тавăрăнатпăр. Михалка Карaçĕ тĕлне çитерехпе темĕнскерле хăй-хай çуйхашнă сасăсем хăлхана илтĕнчĕç.

— Çтапан, итле-ха, Карaç арăмне ватмаст-и? хăлхасене тăратрăмăр.

— Тем, Карaç арăмĕ патак çимест пулĕ вăл, Карaçне хăйне тытса силлес тейĕ,—ответлерĕ Çтапан.

Вăрçаççĕ-ши кусем тесе итлесе тăрсан, пӳртри хайкашу хытăран та хытăрах илтĕнме пуçласан, епĕр Çтапанпа Карaç патне кĕрсе чăрмантарма шутларăмăр. Мĕншĕн тесен манăн хамăн килйышра та ун пек тĕслĕхсем сахал мар пулкалаççĕ. Карчăкпа иккĕн анчах тытăнатпăр пӳртре çавра çил çаврăма, çав вăхăтрах карчăк: чарăн мăн çăвар, чарăн çын килет, тет те, вара епĕ анчах вĕресе тăкăнма тытăннă хуран айне йур сапнă пек шăпах чарăнатăп. Пӳрте кĕрекен çынна мĕнле те пулсан кăмăлă питкуçпа кĕтсе илме тăрăшса пĕр-пĕр йапала тытса,—пĕлтĕр анчах илтĕм çак картуса, кивелчĕ, тĕсĕ карĕ шелмăн,—тесе ларатăн. Çавăн пек тен çавра çиле чарăпăр, тесе кĕрес терĕмĕр Карaç патне.

— Пирĕн килес!

## Бӳрократ.



**— Епĕ сана хăвăн ыйтупа пайан 12 сехет тə 5 минутра килме каланăччĕ. Есĕ каланă вăхăтра килмерĕн. Халĕ ыран килмесĕр пăхса тухаймастăп.**

**— Ху халĕ нимĕн тумасăрах ларанçке.**

**— Сан ыйтуна пăхса тухма сахалтан 5 минут кирлĕ. 12 сехет çурăра ку пӳлĕмə заçедани тума çынсем пухăнма тытăнмала.**

— Килĕрех. Есĕр пухуран тавăрăнатăр пулĕ,— ыйтрĕ пирĕнтен Карaç арамĕ.

— Пухуран-çке,—харăс ответ патăмăр.

— Унта есĕр тĕнче ухмахĕ курмарăр-и?

— Тем, пайанхи пухура ухмах çын курмарăм, кашнийех чипер ăс-тăнпах пынă пулĕ терĕм, мĕншĕн тесен, йалсовет çыруçи пайанхи пухура 5 пин тенкĕлĕх займ салатрĕ,—терĕм епĕ çирĕп сасăпа.

—Аван иртрĕ пайан пуху, займа хапăл тусах йышăнтăмăр, 50-шер тенкĕ çырăнтăмăр,—хушрĕ Çтапан.

— Хапăл тусах йышăнмасăр, займа ĕнтĕ аш вырăнне апат çине йарса çийетĕр пулĕ те-ха, мĕн кирлĕ мар сăмаха лĕпĕртетсе ларaттăр,—шăртланма пуçларĕ Карaç арăмĕ.

— Ухмаха йертĕн пулĕ есĕ, кин, есĕ кăшкăрни анатри урамах илтĕнет, çăвар санăн анчах мар вĕт, епĕ кăшкăрма тытăнсан, санран та хытă кăшкăратăп...

— Е-е, есĕр мана чарма килтĕр-и, есĕр пусмăрласа çӳретĕр-и, ан тарăхтарса ларнă пултăр кунта, пшол ман патран, намăссăрсем, йытăсем!—Карaç арăмĕ урса кайсах кăшкăрма тытăнчĕ.

Чĕрес-хуран, чашăк-тирĕк, çăкăр-кукăль, кашни харпăрхăй тĕлĕн алăк патнеле кусаççĕ. Епĕр ним калама аптăранипе:—айта, Карaç, хамăрпа, тесе шăвăнтăмăр, хамăра ĕнселеме тытăначчен.

— Тухса кай ман патран, есĕ ман пата пĕр лав йапала тийесе килмен, ĕне—лаша çавăтса килмен, есĕ ман пата пуш кĕлеткӳна çеç çакса килтĕн. Кай, тетĕп, кай! Мĕн тăмана пек пăхса ларатăн? И-и-и тăмана, уй тункати, намăссăр, вĕриçĕлен! Тĕкетĕп çатма аврипе тугун ан, леçсе пар займна, кайала, халех леçсе пар. Ай тор çырлах, Карaç займ туйаннă! Епĕ процентлă займа 100 тенкĕлĕх çырăнатăп, тесе тутине чăсса ларaт, пулĕ пухура. И-и, вилменскер, ма çăва илсе каймаст сана чăсланкăна. Çава тĕлне мантăн-им? Тухса кай тетĕп, тухса кай,—йулашки сăмахне калама çук хытă кăшкăрнипе мачча хăми тăрăх утса çӳрекен таракансем шапăрах тăкăнчĕç.

Карaç чылайччен ним чĕнмесĕр чăтса ларнă хыççăн, кайăп, терĕ те, çĕлĕкне илсе пӳртрен тухрĕ.

Ăста кайас-ха ĕнтĕ? Ĕлĕк çук пурнăç пирки киле кĕмеле пулчĕ. Арăма пулах колхоза кĕрейменрĕм, ăна пулах халăх куç умне тухма та намăс. Ех пурнăçăм, тесе тарăнăн сывласа илчĕ те тăвала утрĕ. Колхоз вити тĕлне çитсен коңухсем патне кĕрсе каласса ларнă хыççăн, урайĕнче ларнă çĕртех çывăрса карĕ.

* *
*

Мĕн шыратăн вара есĕ, Евдоки Петровнă, упăшкунтан,—ыйтрĕ Трак районĕнчи Халăх сутйи Алтатирен.

— Ара епĕ унтан нимех те шыраймастăп. Вăл ман пата киле пырса кĕнĕ чух пĕр кăвак сăхман çеç уртса пычĕ. Ман патра 10 çул пурăнчĕ. 10 çул пурăннă хыççăн пĕр каçне темскер шут тытрĕ, тухрĕ те карĕ. Манăн 100 тенкĕ укçа пурччĕ, çавна чиксе карĕ. Епĕ сирĕнтен çав укçана шыраса пама çеç ыйтатăп, сăмахсене ăнланмала Уççăн каларĕ Алтатйи.

—, Мĕншĕн есĕ упăшку сан патран тухса кайни

4—5 çул иртсен тин ёçе сут аллине патăн?—ыйтрĕ сутйепе йунашар ларакан заçедатĕл.

— Мĕншĕн тесен манран илсе кайнă 100 тенкĕ укçа ахаль укçа пулман, телейлĕ укçа пулнă.

— Мĕнле телейлĕ укçа?

— Мĕнлине хăйĕнчен ыйтăр. Чĕлхесĕр мар вăл калама пултарать.

— Çав çĕр тенке кайала илес тетĕн пулать, апла?

— Çапла çав. Мĕнпе ĕн тесен вăл укçи ахалли пулман, телейли пулнă.

— Урăх есĕ унран нимĕн те шырамастăн-и?

— Çук, урăх нимĕн те шырамастăп, çав 100 тенке çеç шыратăп.

— Герасим Михайлович, есĕ мĕн каласа паратăн çак ĕçпе?

— Епĕ кĕскен калатăп.

— Кĕскен кала çав.

— 1920-мĕш çулта епĕ çук пурнăçпа ниçта кайса кĕреймесĕр 16 çултах, çамрăклах Алтатйи патне киле кĕтĕм. 1930-мĕш çула çитиччен унăн упăшки пулса пурăнтăм.

1930-мĕш çулта "пйатилеткă 4 çулта" зайом тухрĕ. Çав зайома сарас тĕлĕшпе йалта пуху туса ăнлантарчĕç. Епĕ зайом усă панине ăнланса илтĕм те процентлă облигацине 100 тенкĕлĕх çырăнса илтĕм. Киле тавăрăнсан Алтатйи мана чутах çисе йарать. Тухса кай, тет, зайомне леçсе пар, тет. Мĕн алла кĕнĕ çавăнпа çапма тытăнчĕ. Тем те пĕр каласа пĕтерчĕ. Вара епĕ çав мăшкăла чăтаймасăр облигацине илтĕм те, тухса карăм. Колхоза кĕтĕм. Конюхра ĕçлеме тытăнтăм. 1931 çулта манăн облигаци 6 тенкĕ процент пачĕ. Вăл укçапа пĕр мăшăр сысна çури туйантăм. 1932 çулта манăн облигаци каллех 6 тенкĕ процент пачĕ. Вăл укçапа чĕчĕ пăрушĕ илтĕм. 1933—34-мĕш çулсенче 12 тенкĕ процент пачĕ, татах йапаласем туйантăм. Колхозра ĕçлесе илнĕ тырăпа сарай тата ампар туйантăм. Кăçал пилĕк çтеналă пӳрт лартас тетĕп-ха...

— Сут заçеданине кайать,—тесе çыруçи пĕлтерчĕ те, сутйесем урăх пӳлĕме кĕрсе карĕç.

***

— Ăнлантăн-и, Петровă Йевдоки?

— Сăмахпа каласа парăр-ха тепре,—ыйтрĕ Алтатйи пригăвăра ăнланмасăр.

— Сана епĕр, санăн пулнă упăшкунтан пĕр пус та шыраса илсе памастпăр. Упăшкуна процентлă облигаци илнĕшĕн вăрçман пулсан, тата иксĕр те пĕрле колхоза кĕнĕ пулсан, есĕ те Çтапан пекех телейлĕ колхозник пулаттăн,—ăнлантарчĕ арăма сутйе.

И. Сӳпенкке

# Кинора

Кинона кăшт пăхса ларнă хыççăн, халăх умне ăнсăртран çур клеткелĕ çын тухса тăчĕ. Ку „Блестящая карьера" кино, картинăн геройĕ Андрей.

— Ну-и тĕлĕнмеле çын,—тесе илчĕç курма пыракансем.—Тути, çур сăмси пур, анчах та куçĕ тата çамки тавраш нимĕн те çук. Мĕнле ши ку çын шутлама пултарать?—тесе сăмахласа илчĕç.

Çав хушăрах пĕри: „—Рамкă!"—тесе пыр шăтăкне çав тери вирлĕн хырса кăшкăрчĕ. Кăшкăрнине илтсен киномеханик Иванов шалт! сикрĕ те, рамкăна йусарĕ. Пасăрхи çур сăмсалă, куçсăр çын чистăй çынах. Тути, сăмси, куçĕ-пуçĕ пурте пур.

— Ну-и механик, шутник шелмă! Пĕр çынна темиçе тĕслĕ кăтартма пултарать тесе сăмахласа илчĕç пĕр-пĕринпе.

Кинона пынă çынсем нумай хушă лăпланса пăхса лараймарĕç. Ак, каллех темĕскерле тискер сасă шăлтăр-шалтăр, хăлтăр-халтăр илтĕне пуçларĕ. Екран çинчи картинă пĕр вырăнтах тăрать.

— Ей, механик! Давай малала кăтарт. Ку кăтра майрана курса йалăхрăмăр ĕнтĕ!—тесе тарăхса кăшкăрчĕ Митак.

Капла кăшкăрсан, механик шăлт аптраса çитрĕ. Темĕнле майпа та çавăрса пăхать, винттисене те тыткаласа пăхать, çапах та кăтра майра пĕр вырăнтах тăрать. Тарăхса çитнипе механик кăтартма чарăнчĕ. Залри лампă та йалтăр-йалтăр çутăлса кайрĕ. Иванов механик аппаратне пăсса тăкса йусама тытăнчĕ.

Аппарат йусасса çур сехет хушши кĕтсе ларчĕç халăхсем.

Иванов механик йалтах аптраса çитрĕ. Унăн питĕнчен çăмăр шывĕ пек тар тăканать.

— Халăхсем! Аппарат çĕмĕрĕлнĕшĕн епĕ айаплă мар. Есĕр айаплă. Ма васкататăр? Ак кураттăр пулĕ ĕнер хам патра аппарат винттисене вĕрене йăвăççинчен турăм вĕт.Васкатсан ăстан чăтать вăл Вĕсем часах тухса ӳкме пултараççĕ вĕт.—Шывла на пуçланă куçĕсене мăч-мач хупкаласа ăнланта рать халăха. Халăхсем çилленсех çитрĕç.

— Аппарат винтисене вĕрене йăвăççинчен тăваççĕ-и?—терĕ пĕри.

— Ес ху вĕрене тункати!—хирĕçсе илчĕ тепри.

Пĕр çур сехет хушшинче механик аппаратне йусанă пек турĕ те, малала кăтартма тытăнчĕ. Пĕрик картинă кăтартнă хыççăн аппарат каллех çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Çу сĕрмен урапа пек чĕриклетме тытăнчĕ. Халăхсем каллех хирĕçме тытăнчĕç.

— Аппаратне Хăнатар çырмине кайса пăрахмала, хуна ăна сыхлама чучĕлă туса тăратмала!—тесе харкашса илчĕç халăхсем.

Çакăн пек кино курчĕç Мăн-Етмен шкулĕнче (Хĕрлĕ Чутай районĕнче). Çичĕ картинлă кинофильмăн картинне канаçлăн пăхмасăрах тарăхса, йатлаçса таврăнчĕç килĕсене.

Кино куракан А. Афорин.

---

**Ретĕн,—ретĕн çулсем тăрăх**
**Лартса тухăр симĕс йăвăç.—**
**Çул çӳреншĕн пӳлмĕ шăрăх.**
**Сулхăнра, йака çул тăрăх**
**Йарăнсах автосем шăвĕç.**
**Пур ватти те, пур вĕтти те**
**Савăнсах сире тав тăвĕç.**

**А. ПЕТТОКИ.**

---

*Йарослав Гашек*

# Чăх йашки

*(„Саттур салтак Швейк çӳревĕсем" кĕнекерен илнĕ сыпăк)*

Лукаш поручик малала чăтса тăма пултараймарĕ. Швейк аллинчен чăххине туртса антарчĕ те:

— Швейк, пĕлетĕр-и есĕр вăрçă вăхăтĕнче мирлĕ халăха çаратакан салтака мĕн тунине?—терĕ.

— Пĕлетĕп, господин поручик, ун пек салтака хисеплĕ вилĕмпе, пăшалпа персе вĕлереççĕ,—йăвашшăн кăна хирĕççĕн сăмах каларĕ Швейк.

— Апла пулсассăн, сана çак ĕçшĕн кантăра туйантарас пулаť. Есĕ, Швейк, чи малтан çаратма пуçланă çын. Путсĕр есĕ, йурăхсăр çын есĕ... Неуштă вара есĕ хăвăн присагăна маннă?.. Çук, текех чăтаймастăп епĕ, ман пуç çурăлса кайма патнех çитнĕ...

Швейк Лукаш поручик çине ыйтулăн пăхса илет те васкавлăн калаçма пуçлаť:

— Господин поручик, пур салтаксем те, тытакан присагăна епĕ пĕр самант та манман. Господин поручик, калама ирĕк парăр-ха, епĕ хамăн аслă патшана 1-мĕш Франц-Иосифа тата унăн апостăллă величествăн генералĕсене тĕрĕс пăхăнса пурăнма, çавăн пекех, пур пуçлăхсемпе аслисене те сума-суса пурăнма, вĕсене хӳтлесе тăма, службăра та, службă тулашĕнче те, пур вăхăтра та, пур ĕспе те паракан вĕсен пур хушувĕсене те итлесе, вĕсене туса пыма присагă тытнă. (Çак сăмахсене калана хыççăн, Швейк урайĕнче выртакан чăххине илет те, çарти йĕркепе тӳррĕн тăрса, пуçлăхне куçран пăхса малала калаçаť). Кусемсĕр пуçне тата императăр—корољ величестви хушнă тăрăх, манăн кашни тăшманпах хире-хирĕç тăрса çапăçмала. Вăл тăшман кирек те ăçта пултăр—хăť шывра, хăť шыв айĕнче, çĕр çинче, сывлăшра, кăнтăрла, çĕрле, наступленире, отступленире! Нихăçан та ниçта та епĕ çар чаçне, тата унăн йалавне пăрахса каймала мар. Хирĕç çапăçакан тăшманпа нимĕнле çыхăну та тытмала мар. Хăвна-ху çар саккунĕсем хушнă пек тӳррĕн тытмала. Тӳрĕ пурăнмала, тӳррĕнех вилĕм умне те пырса тăмала. Турă пулăштăрччĕ ĕнтĕ мана та çакăн пек тӳррĕн пурăнма... Аминљ!.. Господин поручик, калама ирĕк парăр-ха мана, епĕ вăрламан та, çаратман та, хам присагăна епĕ асăрхаса тытнă...

— Халех пăрах чăхха, халех пăрах ăна, выљăх!—Лукаш поручик йĕрес пек сухăрса йачĕ те Швейка вилнĕ чăхха тытнă сылтăм аллиичен протокол хучĕпе çапрĕ.

— Есĕ пăх-ха, мĕн çырнă унта протоколта? Унта акă шурă çине хурапа: çуран çар салтакне, ординарец пулса ĕçлекен Иосиф Швейка сирĕн пата ăсататпăр. Ăна епĕр çарату ĕçĕпе тытсаччĕ...—тенĕ. Ну, халљ калаç ĕнтĕ, мародер, ылханлă путсĕр çын!.. Çук, епĕ сана пĕрре вĕлерĕп те-ха, унччен... Вĕлеретĕпех! Чăнахах, вĕлеретĕп. Ăнлантăн-и есĕ çакна, путсĕр? Намăссăр! Мĕнле-ха есĕ ăвна ху çав тĕрлĕ манма пултарнă?

— Господин поручик, лăпланăр... Кунта нимех те çук, кунта пирĕн пĕр-пĕрне ăнланманни кăна...—Урса кайнă поручика хирĕç Швейк çемçен кăна калаçаť.—Итлĕр-ха, господин поручик, ĕçĕ кунта мĕн пурĕ те çапла çеç пулнă. Сĕтеклĕ апат тупса килме сиртен хушу илнĕ хыççăн, мĕн тăвамши, тесе манăн пит те нумай шухăшлама тиврĕ, мĕншĕн тесен, хăвăрах пĕлетĕр, господин поручик, вакзал патĕнче лаша кăлбассисĕр, тата ашак ашĕсĕр пуçне нимех те сутмаççĕ. Калама ирĕк парăр-ха... Епĕ хам ĕçе пур йенчен те виçсе, шутласа тунă. Вăрçă чухнехи йăвăрлăхсем çăмăлтарах пулччăр тесен сителĕклĕрех лайăх апат та çимеле-çке. Манăн сире савăнтарас килчĕ, господин поручик: епĕ сирĕн валљи чăх йашки пĕçерсе парас шухăш тытрăм.

— Чăх йашки!—Лукаш поручик икĕ аллипех хăй пуçне йарса тытрĕ.

— Çаплах ĕнтĕ, господин поручик, çаплах. Чăннипех чăх йашки пĕçерсе парас, терĕм. Акă—йашка валљи епĕ сухан, тата 50 грам вермишел те илнĕ. Акă, пăхăр. Пĕр кĕсйере манăн сухан, тепринче акă вермишел. Тăварпа пăрăç хамăр канцељартех пур, терĕм. Çапла, йашка пĕçермешкĕн пирĕн чăххи çеç ситмесчĕ. Ну, çапла ĕпĕ вакзалтан тухрăм та Ишатарса йенне кайрăм. Çак Ишатарса тенĕскер вăл ни хула, ни йал мар. Анчах та кĕнĕ çĕрте, малтанхи урамра, йупа çинче „Ишатарса—хула" тесе çырса хунă. Çакăнтан çеç вăл хула пулнине пĕлме пулаť. Пĕчĕк сатсемлĕ урампа иртетĕп, иккĕмĕшпе, виççĕмĕшпе, тăваттăмĕшпе, пиллĕкĕмĕшпе, улттăмĕшпе, çиччĕмĕшпе, саккăрăмĕшпе, тăххăрăмĕшпе, вуннăмĕшпе, вунпĕрĕмĕшпе, вуниккĕмĕшпе... Вăтăрăмĕш урамсенче çеç, чи вĕçĕнче, чи хĕринчи çурт хыçĕнче вите патĕнче çӳрекен чăхсене куртăм. Епĕ чăхсем çывăхнеле пытăм та чи пысăккине, чи самăррине суйласа илтĕм. Акă, господин поручик, хăвăрах курма пултаратăр, чăххи—çара çу, хыпашламали те çук, пĕрчĕлĕ тырă çисе самăрланни тӳрех курăнаť... Çаплах, пăхса тăракансем умĕнчех, ăна епĕ урисенчен йарса тытрăм та нимĕсле те, чехла та кам чăххи ку, ăна епĕ сутăн илесшĕн, тесе ыйтатăп. Пухăннă çынсем мадйарла темскер кăшкăрашаççĕ... Пăхатăп, хĕрринчи çуртран ман патала арçынпа хĕрарăм чупаççĕ, чупаççĕ те мана мадйарла, унтан нимĕсле кунçутипех чăх вăрланă тесе вăрçаççĕ. Епĕ вĕсене: ман çине ан кăшкăрăр, сирĕн пата чăх илме мана пуçлăх йанă, тетĕп. Унтан вĕсене ĕç мĕнле пулнине каласа паратăп. Хам мадйар чăххине урисенчен алăра тытса тăратăп. Сарсартăк чăх çунаттисемпе тапранчĕ те çӳлеле вĕçсе хăпарма шут тытрĕ. Чăххине епĕ çăмăллăн çеç тытса тăраттăмччĕ те хăйпе пĕрле вăл ман алла та çӳлелле туртса хăпарчĕ. Чăххи тӳрех хуçи сăмси çине ларчĕ. Лешĕ кăшкăрма пуçларĕ, есĕ мана питрен чăхпа çапатăн, тет. Арăмĕ те тата: „Ай, ман чăхха пĕтерчĕ, ай, ман тĕпеклĕскерне пĕтерчĕ!"—тесе çухăраť. Ĕçне тĕплĕ пĕлмесĕрех темле ухмахсем ман çине патрулљсене кăтартса йачĕç. Вара епĕ патрулљсене вакзала комендант патне ăсатма хушрăм, мĕншĕн тесен, епĕ айăпсăрри такамшăн та, шыв çинчи çу çӳлеле тухса тăнă пекех, уççăн курăнса тăраччĕ. Анчах ĕç çапла та са пулнă пулсан та, комендант патĕнче дежур-

нăйра тăракан господин поручикпа епĕ путлех калаçаймарăм. Лайăх апат тупса килме йани çинчен сиртен телефонпа ыйтса пăхма каласан та вăл çаплах мана итлемерĕ. Ку çеç мар-ха, вăл ман çине кăшкăрса пăрахрĕ,—есĕ ним те ан калаç,—тет—сан куçусем тăрăхах епĕ саншăн хулăн туратпа çирĕп кантăра куççуљ тăкьине куратăп,—тет.—Ман патăмра çавăн пек жалăбăсем тата та пур, виçĕмкун çеç акă çакăнтан инçех те мар кăркка çухални çинчен пĕлтерчĕç, тет. Епĕ ăна хирĕç: ун чухне епĕр Робе станцинче пулнă, тетĕп. Каккуй унта, вăл маншăн нимех те мар, тет. Вара вăл мана сирĕн пата ăсатрĕ. Çавăнтах тата ман çине темле йефрейтăрласкер те кăшкăрса пăрахрĕ. Малтанах ăна епĕ асăрхаман та.—Кам епĕ?—тесе ыйтаť. Хирĕç вара:—есĕ йефрейтăр, йегĕрсен полкинче есĕ колоннă пуçĕ, артилеринче аслă кононир,—тесе ответ патăм. Кайран тытса тăмарĕ вара...

Лукаш поручик Швейк калавне итленĕ хыççăн пĕр минут таран чĕнмесĕр тăчĕ те тарăхса:

— Швейк, сирĕнпе тĕлĕнмеле, казуслă, ниçта пулман ĕçсем, ху каланă пек „йăнăшсемпе“ пĕрпĕрне „ăнланманнисем“ çав тĕрлĕ нумай пулса пыраççĕ. Санăн çав ĕçсенчен хăтăласах пулаť. Ăсту, унсăрăн сана каре хушшинче çирĕп кантăра пулăшма пултарĕ. Анлантăн-и, есĕ мана?—терĕ.

— Ăнлантăм-çке, господин поручик, каре тени вăл салтаксене тăвасă кĕтеслĕ ĕретпе тăратса тухсан пулаť. Хăшпĕр чухне карене виçĕ, йе пилĕк роттăран та тăваççĕ... Мĕнле господин поручик, çăрарах пултăр, тесе чăх йашкине ыгларах вермишел йамала пулмĕ-ши?

— Швейк, текех сана чăтса тăма пултараймастăп, чăххуна ил те халех тухса кайма хушатăп... Тухса кай кунтан, ухмах, унсăрăн чăххупа пуçăнтан çапса çурăп акă, тух,—тетĕп.

— Иураť, господин поручик, кайатăп, анчах та калама ирĕк парăр-ха, чăх йашкине йама çелдерейпа кишĕр тупаймарăм-çке... Епĕ йашкана çĕр...

„Улми“ теме ĕлкĕреймерĕ—чăххи-мĕнĕпех Швейк вагонтан пуљă пек вĕçсе тухрĕ. Лукаш поручик сывлăшне çавăрмасăр çавăнтах пĕр стакан конйак ĕçсе йачĕ.

Швейк вагон чÿречисем умĕнче чеçт пачĕ те хăвăртах вагонсем хыçне кĕрсе çухалчĕ.

**С. Лашман куçарнă.**

---

# Манăçа йулнă ĕç

*Шухăшĕ йалкорăн. Укерчĕкĕ В. Филиппăвăн.*




**— Ăçта чупан?**

**— Пирĕн Сиктĕрме йалсовечĕ 1927-мĕш çултах çырма варрине кĕпер туса партнă, анчах кĕперĕн икĕ йенчи çыранпа çыхăнакан дамбăна пайанхи кун та тума шухăшламан. Дамбă çуккине кураймасť пуљ тесе, районна кайса йалсовот вaљљи куçлăх илсе килес, тетĕп.**

# Тӳсĕмлĕхĕн вăйĕ

Хама кура мар, епĕ çав тери хытă тарăхатăп. Сысна аçи тем чул шăрчĕсене тăратса хартлатсан та ман чул тарăхма пултараймаст пулĕ. Тӳррипех каластăк, епĕ пĕрре тарăхсан йапăх тарăхаканни мар, тарăхатăп тăк уш питĕ плотнă тарăхатăп. Штоб çан-çурăм хĕрнĕ тимĕрпе пуснă йевĕр чăр! пĕçерсе кайтăр. Ахалĕн мĕн вăл пустуй çиленсе тутана мăрт! тытса çӳрени, унтан мĕн усси? Çиленни—тарăхнинчен те усăлă пултăр, вăт мĕнле вăл?..

Пĕрре çапла манăн кăçал тарăхмала пулчĕ. Анчах çын çине мар çилентĕм епĕ, хам çинех, çак пысăк сăмсапа шĕвĕр сухала çĕклесе çӳрекен çын çине.

Çиленесси, çĕр çăтманскер, ак çапла пулчĕ: ака туй курма Купăрла варне кайрăм. Пĕтĕм йал, пылхурчĕсем вĕлле çывăхĕнче сĕрленĕ пек, сĕрлесе ларат. Унта хĕрлĕ йалавĕсем вĕл-вĕл вĕçсе кăмăла çĕклентереççĕ. Лĕпĕш пек шап-шур тумланнă хĕрарăмсемпе арçынсем пĕтĕм йалăн илемне кӳреççĕ.

Кĕсемшĕн епĕ питĕ савăнтăм. Ватă шăмшака шеллемесĕрех йашсемпе тавлашса чупса та пăхрăм, кĕрешсе те илтĕм, ташласа та кăтартрăм. Ака пĕтнĕ йатпа тунă праçник, савăнас пулат! Ĕлĕк йĕрни те çитĕ. Халь ĕнтĕ уш çук, тек-тек йĕрекеннисем мар епĕр.

Вăт савăннипе пĕр çĕре ăратлă ĕнесене, чавса тăршĕ хӳрелĕ сурăхсене, кукăр сăмсалă сыснасене пăхса çӳретĕп.

Ну, çӳретĕп пăхса. Мĕн тĕлĕнмели пур унта? Кун пек ĕнесемпе сурăхсем пирĕн колхозăн та пур. Халĕ кашни колхозрах ăратлисене туйанаççĕ.

— Пастай ха,—тетĕп кăшт ларса чĕлĕм туртнă хушăра,—ытти колхозсен тырă сурчĕсене кайса курас, тен мĕн те пулин çĕнĕреххи пулĕ?

Пăхса çӳретĕп. Темĕнле курупкăсенче суртлă ыраш пĕрчисем, тулă, сĕлĕ пĕрчисем. Ну, тăратăп пăхса. Мĕн тĕлĕнмели пур унта? Пирĕн колхозăн та пур ун пек суртлă тырăсем. Пĕр вунă çул кайала пулсан чăнах та тĕлĕннипе ĕнсесене хыçса çӳрĕччĕç. Халĕ пире тĕлĕнтермеççĕ кусем. Вĕреннĕ ĕнтĕ çитĕнӳсене курма.

Тăратăп çапла шухăшласа.

— Йакăп!—терĕ мана тахăшĕ. Кĕлт тĕртрĕ пӳрнисемпе айăк пĕрчинчен. Çавăрăнса пахатăп—матка тăра парат.

— Мĕн? Аťа-ха, çавăнта Ирчемес колхозĕн ăйрине кайса курар!

Мана матка сăмахĕхи те тĕлĕнтермерĕ.—Ăйăр, ăйăрах ĕнтĕ, мĕн унта тĕлĕнмели пур,—тетĕп хам ăшăмра. Вăл ăйăра курма кайиччен хамăр колхозри ăйăра кайса тасатам!..

Маткапа çынсем хушшипе утатпăр. Нимĕн те тĕлĕнтермест. Чĕрем те вырăнĕнчех ларат, куçсем те ытлашши чарăлмаççĕ.

Хӳмесем çумĕнче диаграмсем çакăнса тараççĕ. Унта çитĕнӳсене кăтартнă пулсан, вăл çитĕнӳсем пирĕн те пур; хăш колхозсем хăйсем кадăр хатĕрлени çинчен цыфăрпах кăтартнă пулсан, кадăрсене пирĕн те хатĕрлеççĕ.

Ну, мĕн тĕлĕнмели унта? Тĕлĕнсен чĕре, кăкăртан чĕре картине çĕмĕрсех, тухса кайма пултарат. Тĕлĕнместĕп те, чĕре те тапмаст.

Каллех карчăк кĕлт!—тĕртрĕ айăк пĕрчинчен,

— Вăн пăх çав ăйăра, йепле тĕреклĕ вăл!

Ăйăр тавра çынсем, хурт çурисем пек, йавăнса илнĕ. Шывпа пуç тăрăх чашлаттарсан та салана çук.

— Ну,—тетĕп,—епĕ раз лашасене пăхакан аслă бригадир-тăк пăхас çак ăйăра!

Çынсене айак пĕрчинчен майăрласах малти йĕркене тухса тăтăм.

Ман умра ăйăр. Тимĕр кăвак. Самăр. Тĕреклĕ. Кĕлетки çийĕнче тĕкĕр çийĕнчи пек сăнĕсем курăнаççĕ пек.

— Ай,—тетĕп хама хам,—тфу! Епĕ çын-и? Епĕ—ударник, лаша пăхатăп! Мĕншĕн пирĕн колхозра кун пек чаплă ăйăр çук? Кун пек ăйăр çитĕнтерме манăн тӳсĕмлĕхĕн вăйĕ çуки мĕн?

Вот çакăн пек ăйăр ӳстерейменшĕн тарăхрăм та епĕ хам çине хам.

— Тфу!—тесе суратăп хам çине хам.—Етем-и епĕ çавăн пек ăйăр ӳстерейменскер?

Колхоз витине таврăнтăм. Тимĕр кăвак ăйăр куçа хупсанах куç умне килсе тухат.

— Ну, тетĕп,—манăн тӳсĕмлĕхĕн вăйĕ çук мар, ӳстеретĕп чаплă ăйăрсем!..

Лашасене кунне икшер тасатма тытăнтăмăр. Утсем çап-çутă пулса кайрĕç—тĕкĕр пек. Пăхсан чун савăнат. Анчах хăш учĕсем хăйсене панă апачĕсене çĕре тăкаççĕ те кайран выçă тăраççĕ.

— Тăхта, шĕшлĕ сăмса Йакăп,—тетĕп хама хам,—санăн тӳсĕмлĕхĕн вăйĕ пур-çке, лашасенчен уйăрăлмала мар!..

Уйăрăлмастăп утсенчен. Уйăрăлмаççĕ ытти конюхсем те. Утсенчен уйăрăлсанах чĕрене хуйхă пуснă пек. Утсем хушшинче çӳренĕ чух пĕтĕм тĕнче илемленсе кайат. Вăт йепле вăл ĕçе йуратсан!..

Халĕ ĕнтĕ пырса та ан çыхлан Ирчемес ăйри. Йакăп йапăх ăйăр ӳстермĕ ĕнтĕ!..

Анчах пĕлтĕрхи ака туйĕнче намăс курнине халĕ те манмастăп епĕ. Хам çине хам тарăхрăм ун чух. Анчах тарăхсан та усă тумала тарăхас пулат. Кăçал та тарăхсан тата хытăрах чавсана тавăрса ĕçлетĕп.

Вăт ăна йепле ĕçлес пулат!

И. Кашлинке.

---

**Çитĕ халĕ сăмсана усса тăма,—**
**Кунсем шăранаççĕ кăварлăн.**
**Пурте тухăр шоççесем тума,**
**Ăмăртса ĕçлер ударлăн.**

**И. ТУКТАШ.**

# Пĕчĕкçĕ параппан çырса пынинчен.

Пайан епĕ пионерсен хулари 3 мĕш отрйадне ленкрĕм. Ачисем саванăçлă-кăмăллă. Пит йуратса пăрахрăм хăйсене.

Мана Гриша аллине пачĕ те вожатăй çапла каларĕ:

— Çак параппаншăн ответ санăн тытмала пулать. Ăна куç шăрçине сыхланă пекех сыхласа усра,— терĕ.

— Йурать,—терĕ манăн çĕнĕ хуçа.

Вăл мана пит лайăх сыхласа усрассине систерес шухăшпа манăн тир çиййĕн ик патакпа çав тери вăйлă çапса илчĕ, епĕ пĕтĕмпех чĕтрекене йерсе карăм.

---

Уйăх ĕнтĕ мана çапаççĕ.

Ирхине те мана çапаççĕ, кăнтăрла та, каçпа та.

Горт магазинĕнче çакăнса тăнă чухне, мана тахăшĕ: çынсем кунне 6—7—8 сехет çеç ĕçлеççĕ, тенĕччĕ. Апла мар иккен.

Талăкра 8 сехет ĕçлемеле пулсассăн епĕ хама хам чи телейлĕ тесе шухăшлăттăм. Мана вĕт кунне 12-шер сехет çапаççĕ. Выходной кунсенче 16-шер сехет çапни те пулкалать.

---

Мана çапнă чухне вĕсем урисемпе тапăртатаççĕ тата йура йурлаççĕ:

„Пара—параппанлăр,  
Пара—параппанлăр,  
Пара—параппанлăр  
Сулмакла.  
Пурнăç аɼи анлă,  
Кĕрешсе каçмалăх  
Пиччесемпе танлă  
Пулмала"

теççĕ (ку тĕлте вара питĕ хытă çапаççĕ).

Пĕлместĕп, манăн ĕмĕрĕм ку отрйадра миçе куна тăсăлĕ-ши? Ĕнер ачасем калаçса тăнине илтрĕм. Пĕри калать:—иртнĕ çура епĕр пилĕк параппан çуртăмăр,— тет.

Теприи калать: пилĕк мар, çиччĕ, тет!

— Апла мар, пĕлтĕртенпе çиччĕмĕш çакă пулать,—терĕ те виççĕмĕш ачи ман тиртен çав тери чышкăпа йанлатарса йачĕ, епĕ антăхса пĕтес патнех çитрĕм.

Хăрушă кунсем çитрĕç. Мана ирхине 6 сехетре çапма пуçлаççĕ те çурçĕрччченех çапаççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн? Мĕншĕн?

---

Мĕншĕнни паллă. Такам пирĕн отрйад ĕçĕсемпе паллашма килет, тет. Çавăнпа мана çав тери нумай çапаççĕ. Килсен жалăбă парас тетĕп-ха.

Ах, хăвăртрах, хăвăртрах килтĕрчĕ!..

Пуринчен малта—епĕ, ман хыççăн ачасем. Хăрах айккинче вожатăй. (Ăна епĕ, пуринчен ытла ун аллине лексен, тӳсме пултараймастăп). Хăнасене хирĕç тухса илме пуханса карăмăр. Мана çав тери хытă çапса пычĕç, куçран-пуçран вут-хĕм тухса çеç пычĕ.

Иккĕн килнĕ—арçынпа хĕрарăм.

---

Отрйадшăн кăмăллă мар ĕçсем пулса иртеççĕ пулмала. Мана тĕкĕнмеççĕ. Пионерсем кĕтессенче тем çинчен шăппăн калаçкаласа тăни илтĕнкелет.

---

Епĕ кĕтесре выртнă пӳлĕме ĕнер вожатăйпе пĕрле килнĕ хăнасем кĕрсе пăхрĕç. Вожатăй кăмăлсăр пулнă çын пек нимĕн те ченмест. Хăнисем ăна ăс параççĕ:

— Ĕçсем начар пыраççĕ сирĕн. Ачасем ăсланса пыни палăрмасть. Тĕрĕссипе ӳпкелешеççĕ: вĕсене талăкра 12-шер сехет параппан хыççăн чуптаратăн, теççĕ есĕ. Апла йурать-и? Тата сирĕн йавăр темăсемпе докладсем тăвас метăд мĕне кирлĕ вăл? Ĕнер есĕ тĕнчери лару-тăру çинчен ăнланмала мар чĕлхепе тунă доклада пионерсем мар, аслăрахисем те ăнланма пултарас çук. Пуш параппан çапни çеç пулать ун пек доклад туни. Апла йурамасть, йулташ! Аван мар! ачасем çеç вĕсем,— çавна манмала мар. Параппан сахалрах çапмала, ун вырăнне нумайрах ĕçлеме тăрăшмала.

„Тĕрĕс!" тесе кăшкăрса йарасшăн пултăм ăна хирĕç епĕ, анчах ун вырăнне туртăнса илтĕм те, тире çурсах пăрахрăм.

Вĕсем виççĕшĕ те манăн çуралнă тирĕм патне пычĕç те, пĕр хăни вожатăй çине тĕксĕмĕн пăхса каларĕ:

— Ак сирĕн ĕçсем пирки мĕн пулнă. Пăхăр ĕнтĕ. Курăр та хăвăра валɼи вывăд тăвăр!—терĕ.

Б. Л.

Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ. Ответ. редактор ГУР. ТИТОВ.

Сдано в производство 4-V—35 г. Подписано к печати 17-VII—35 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 280. Заказ № 824

Формат бумаги 1/8. Об'ем 1,25 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза, Тираж 2.900 Из.-газ. «Канаш»




— Есĕ, ачам, хăвăн тĕллеве аван куратни?
— Аван куратăп. Манăн тĕллев — социалисăмла çĕршыва сыхлаканнисен пирвайхи ретĕнче пуласси.